Эсир ыйтнипе

Пенси ыйтăвĕсем пиркиех

Ыйтусем çине Раççей Пенси Фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕн пенсисем çирĕплетес, çĕнĕрен шутласа парас тата тӳлес енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Надежда Геннадьевна СЕМЕНОВА хуравлать.

– Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсисене массăллă çĕнĕрен шутласа палăртнă тата вĕсене корректировка тунă. Пенсионерсен тупăшĕ çинче çакă епле палăрĕ?

– Малтанах пенсие çĕнĕрен шутласа пани тата корректировка туни мĕн иккенне палăртар-ха. Ку вăл – унченхи çул итогĕсем тăрăх страхламалли взноссене тӳленипе ĕç пенсийĕн страхлакан пайне улăштарни. Пенси виçине ĕçлекен пенсионерсенне кăна тата пенси шутласа панă хыççăн 12 уйăхран е пенси виçине çĕнĕрен юлашки хут шутласа панă хыççăн кăна çĕнĕрен шутласа параççĕ. Пенсионер çак 12 уйăх хушшинче мĕн чухлĕ ĕçлени пĕлтерĕшлĕ мар - 2 е 3 уйăх ĕçленĕ. Тĕп пĕлтерĕшли ĕçленĕ çак тапхăрта страховани взносĕсене тӳлесе тăни.

Пенсие çĕнĕрен шутласа пама пенсионерăн заявленийĕ кирлĕ. Ана Пенси Фончĕн вырăнти управленине çырса памалла.

Пенси виçин корректировкине илес пулсан, унта унченхи çул палăртнă тата çĕнĕрен шутласа панă пур пенсисем те кĕреççĕ. Ана обязательнăй йĕркепе туса ирттереççĕ. Корректировка валли пенсионертан заявлени кирлĕ мар.

Пенси виçине корректировка тунă чух вăл ӳсме те, чакма та, унченхи шайрах юлма та пултарать. Ку вăл пĕтĕмпех ĕç паракан е уйрăм предприниматель страховани взносĕсене йĕркеллĕ тӳлесе тăнипе тата кун пирки информаци пенси палăртнă е çĕнĕрен расчет тунă чухне Пенси Фондне вăхăтра тăратнипе çыхăннă. Енчен те пенси шутласа панă е çĕнĕрен расчет тунă чух страхлакан взноссен виçине чакарнă пулсан, çулталăк итогĕсемпе вара ку кăтарту проценчĕ пысăкрах пулсан - пенси виçи ӳсет, страхлакан взноссен виçине ӳстернĕ, çулталăк итогĕсемпе ку кăтарту проценчĕ пĕчĕкрех пулсан - пенси виçи чакать, енчен те çулталăк тăршшĕпех уйăхсерен взноссене мĕн чухлĕ шутласа панă, çавăн чухлех тӳлесе тăнă пулсан - пенси виçи çав шайрах юлать, улшăнмасть.

– Мĕншĕн-ха пенсисен виçине çĕнĕрен шутласа парассине тата корректировка туса ирттерессине массăллă майпа июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса туса ирттереççĕ?

– Ку вăл акă мĕнпе çыхăннă. Иртнĕ çул тӳленĕ страховани взносĕсене ĕçлекенсен лицевой пенси счечĕсем çине ĕç паракансем мартăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр кашнин пиркиех унченхи çулхи харпăр хăй сведенийĕсене тăратаççĕ. Хыççăн вĕсене налук органĕсен даннăйĕсемпе тĕрĕслеççĕ. Июнь уйăхĕ тĕлне ку информаци Пенси Фондне паллă пулать. Уйăх хушшинче пенсин страхлакан пайне корректировка тăватпăр тата çĕнĕрен шутласа палăртатпăр.

Енчен те пенси виçине çĕнĕрен шутласа пама заявлени пĕрремĕш çур çулта çырса панă пулсан, пенсионер çĕнĕрен шутласа панă пенсие июльтен тытăнса, пенсие çĕнĕрен шутласа пама тивĕç уйăхран тытăнса хушма пенсипе пĕрле илме тытăнать.

Июнь уйăхĕн вĕçĕнче тата каярах панă заявленисем енĕпе пенси виçине çĕнĕрен шутласа парассине уйрăмшарăн, тепĕр уйăхран пуçласа туса ирттереççĕ.

– Енчен те пенсионер пенси виçине çĕнĕрĕн шутлаттарма заявлени çырмалли пирки пĕлмен пулсан, унăн укçисем пĕтеççĕ-и?

– Çук, пĕтмеççĕ, вĕсем унăн лицевой счечĕ çинчех юлаççĕ. Пенсионер заявлени çырса парсанах пенси виçине палăртнă чух тата перерасчет вăхăтĕнче шута илмен страховани взносĕсем мĕн чухлĕ куçнине çĕнĕрен шута илеççĕ.

– Пенсие çĕнĕрен шутласа панă хыççăн вăл мĕн чухлĕ ӳсмелле?

– Районĕпе кăçал ĕçлекен 504 пенсионерăнне пенси виçине çĕнĕрен шутласа панă. Ĕç пенсийĕн страхлакан пайĕ вăтамран 54 тенкĕ те 8 пуслăх ӳснĕ.

– Корректировка итогĕсем еплерех тата?

– 933 ĕç пенсине корректировка тунă. Çавна май 31 пенсин виçи вăтамран 12 тенкĕ те 26 пус хăпарнă, 24 пенсин виçи 7 тенкĕ те 61 пус чухлĕ чакнă.

Çырав ыйтăвĕсемпе

Ĕç ăнăçлă пырать

Ял хуçалăх çыравĕ, Раççейĕн пур кĕтесĕсенчи пекех, Муркаш районĕнче те хĕрӳ пырать.

– Пирĕн районта çырав 15410 кил хуçалăхĕнче, 42 сад пĕрлешĕвĕн 1566 участокĕнче, 31 хушма предприятипе 59 фермер хуçалăхĕнче, 26 ял хуçалăх организацийĕнче, 2 уйрăм предприниматель хуçалăхĕпе 3 пĕчĕк организацире иртмелле, – каласа парать районти статистика пуçлăхĕ Светлана Фадеевна Кириллова. – Çырав ăнăçлă пырать, унта халăх активлă хутшăнать. Çакна кашни кунхи пĕтĕмлетӳсем çирĕплетеççĕ.

Районти статистика пайĕнче ĕçлекенсен те, координаторсемпе инструкторсен те, çыруçăсен те пĕр канăç та çук: хăвăрт, пахалăхлă ĕçлемелле.

Москакасси координатор участокне Валерий Павлович Голубев ертсе пырать. Вăл чи пысăкки, 8 инструктор участокне пĕрлештерет. Муркаш координаци участокне Роза Александровна Макарова, Йӳçкассисенне Иван Тихонович Тихонов ертсе пыраççĕ. Ĕçе йĕркелеме пĕлекенскерсем пурте.

– Мĕнле те пулин йывăр, ăнланман ыйту сиксе тухсанах çыруçăсем патне вырăна çитсе пулăшассине йĕркелерĕмĕр,- тет Валентина Алексеевна Замятина тĕп специалист.

Çырава ăнăçлă ирттерес енĕпе Муркаш районĕ тăрăх çирĕплетнĕ специалист Альбина Фадеевна Мамейкина тата Татьяна Геннадьевна Любимова Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи тăваттăмĕш инструктор участокĕнче те пулчĕç. Пирĕн, çыруçăсен ыйтăвĕсем çине тулли хурав пачĕç, çырав хучĕсене епле çырмаллине ăнлантарчĕç. Пирĕн ĕçпе кăмăллă пулчĕç.

Тăваттăмĕш инструктор участокне Луиза Ивановна Александрова ертсе пырать. Яланах халăхпа ĕçленĕскер – ферма заведующийĕ, колхозри тĕп зоотехник, ял Совет председателĕ пулнăскер – ĕçе йĕркелеме, çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Пурĕ пилĕк çыруçă – Елена Елисеевна Андреева, Лилия Анатольевна Серафимова, Галина Александровна Смирнова учительсем тата эпĕ, пурте Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта ĕçлетпĕр, Елена Германовна Ильина, Тивĕш библиотекин заведующийĕ.

Чыслă та сумлă çыруçă пуласси – йывăр та ответлă. Кунсерен вун-вун çынпа курса калаçмалла, кирлĕ информаци илмелле, çынсен ыйтăвĕсене хуравлама пĕлмелле. Ыйтăвĕсем вара тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Ял хуçалăх перепиçĕ çинчен те, çыравпа пачах çыхăнманнисем те. Раççейпе ют çĕршывсем хушшинчи хутшăнусем, правительство юлашки тапхăрта кĕртнĕ наци проекчĕсем, çăмăллăхсемпе çĕнĕлĕхсем, право ыйтăвĕсем интереслентереççĕ ял çыннине.

Çырав хучĕсене тĕрĕс те тирпейлĕ çырасси хамăрăн тĕп тивĕççенчен пĕри пулни çинчен те манмастпăр.

... Мăн Турханти Вячеслав Михайлович Ивановсен хуçалăхĕ ял варринче вырнаçнăран паянах вĕсем патне çитме палăртманччĕ. Çула май тĕл пултăм, хирте, кăçал çуркунне виçсе илнĕ çĕр пайĕн лаптăкĕ çинче. Кил хуçине те, мăшăрне те аван пĕлетĕп. Зоя Филимоновна Афанасьева шкулта 11 çул ĕнтĕ газооператор пулса ĕçлет. Унччен Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз ферминче сыснасем пăхнă, çăвăрлаттарнă.

– Икĕ гектар çине сĕлĕ тата урпа акнăччĕ. Сĕллине выльăх апачлĕх çулас терĕмĕр те, – кăмăллăн юмахларĕ кил хуçи. Сассинче пăшăрханни те палăрчĕ. – Ашкăрса ӳсмеллескерччĕ те, çумăрĕсем пачах та пулмарĕç.

Ывăлĕ те кунтах. Улми йывăççинчен аякка ӳсмест теççĕ. Кил шутлă, пурнăç шутлă каччă Игорь Иванов уйрăм хуçалăх тытать, кил-çурт çавăрнă. Çăмăллатнă кредит илсе выльăх-чĕрлĕх вити купалас тĕллевлĕ.

– Мотоблокпа çулма пуçланăччĕ те косилки тем чăхăмларĕ-ха,- тет вăл.

Вашлатать кăна çава сасси. Сарлака пакуссем таçтах тăсăлаççĕ.

Ивановсен Марина хĕрĕ те ялах кавча тухнă, Константин Горохина. Ял вĕçĕнче вырнаçнă хуçалăхра кăмăллăн кĕтсе илчĕç. Тирпейлĕ, çирĕп хуçалăх. Урамран кĕрес çул ик айккипе виноград явăнса ӳсет. Çемье пуçĕ Константин Владимирович, тин çеç иккĕмĕш хут "атте" ятне илтсе çунатланнăскер, мал ĕмĕтлĕ:

– Çĕр пур, акса-лартса хăвартăмăр. Трактор, ытти техника кирлĕ. Çĕр пулăхне те лайăхлатмалла, ача пек вĕт вăл çĕр, лайăх пăхмасăр тухăç илеймĕн. Çырав хыççăн çĕр çынни енне кăмăл çаврăнĕ-ши çĕршыва ертсе пыракансен?

Ял хуçалăхне аталантарма татах çĕнĕ майсем туса парасса шанать хресчен.

И. РАЕВСКАЯ, çыруçă.

Тĕл пулу

Ыр ятлă пулăр!

Учительшĕн хăй вĕрентнĕ ачасем сума сунинчен пахараххи, хаклăраххи мĕскер пултăр! Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкултан вунă çул каялла вĕренсе тухнисем хăйсен тĕл пулăвне кĕтмен-туман çĕртен чĕнсен пĕр тĕлĕнтĕм, пĕр савăнтăм: пĕрремĕш учитель те, класс ертӳçи те мар. Ултă çултискерсем патĕнче пĕрремĕшĕнче чух воспитатель пулнăччĕ, вăтам классенче тăван ен культури вĕрентнĕ, эрнере пĕр кун, çавă çеç.

Акă вĕсем, 1996 çулхи çуркуннепе тăхăр çул вĕренни çинчен алла аттестат илнĕскерсем. Ача чухнехиллех уçă чунлă, ырă кăмăллă, шăкăл-шăкăл, пĕр çемьери пек. Аса илӳ, аса илӳ... Юратнă пĕрремĕш учительници Галина Константиновна Павлова та, 5-9 классенче класс етрӳçи пулнă Алевтина Владимировна Петрова та, эпĕ те вĕсемпе пĕрле аса илӳ тĕнчине путрăмăр, вĕсен шкулти пурнăç çулĕпе тепĕр хут утса-чупса тухрăмăр, паянхи шăписемпе паллашрăмăр. Кашниех пурнăçра хăй вырăнне тупнă. Вĕсем мал ĕмĕтлĕ, маттур пулнишĕн чунтан хĕпĕртерĕмĕр.

Хĕрсем пурте Шупашкарта пурăнаççĕ. Лариса Соловьева суту-илӳре ĕçлет. Училище, техникум хыççăн Мускаври экономика институтĕн Шупашкарти филиалне куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕ. Тепĕр çул юлнă вĕренсе тухса алла диплом иличчен. "Палан" магазинта ĕçлет. Ахаль сутуçăран пуçласа товароведа çитнĕ.

Наталия Соловьева (Пудова) та сутуçă. Кĕркунне вăл та аслă шкула вĕренме кĕрес тĕллевлĕ.

Надежда Фомина (Леонтьева) Çĕрпӳре çĕвĕçĕ, каярах закройщицăна вĕренсе тухнă, ателье ĕçченĕ. Юратать хăй ĕçне Шетмĕ хĕрĕ, халĕ Шупашкар кинĕ. Икĕ пĕчĕк хĕр пĕрчи Машăпа Даша йĕкерешсем вĕсен.

Наталья Осипова (Сенигерова) – троллейбус водителĕ. 12-мĕш маршрутпа çӳрекенскере çак кунсенче çĕнĕ троллейбус çине лартрĕç. Аван, хăй ĕçне юратса тунăран тивĕçнĕ вăл çак чыса.

Икĕ Анатолий, Петровсем, ялта тĕпленнĕ, пĕри çемьеллĕ тепри хальлĕхе пĕрченех, васкамасть-ха. Ял хуçалăх академийĕнче пĕлӳ пухнăскер, çĕр ĕçченĕн пурнăçне çĕнĕлле йĕркелесе аталантарса яма ĕмĕтленет.

Николай Краснов – водитель. "Шупашкарта "Газель" грузотакси çинче ĕçленĕ тапхăрта çур Раççей çаврăнтăм,- пĕлтерет вăл. – Çитмен хула юлмарĕ те пуль".

Мобильлĕ телефонĕсем пĕрин те теприн вĕçĕмсĕр сас параççĕ. Аякра, Чулхулара ĕçленĕ май, тĕл пулăва килме май килмен Александр Петровпа Дмитрий Осипов, ыттисем, пĕрле вĕреннисем, тăтăш шăнкăравларĕç. "Саламлатпăр, эпир те сирĕнпе пĕрле халĕ савăнăçлă тĕл пулура, вăрман уçланкинчи шухăшсемпе",- терĕç телей те ырлăх-сывлăх сунса.

Хаклă вĕренекенсем! Вунă çул, аллă çул ирттĕр, тăван шкулшăн эсир яланах кĕтнĕ хăнасем. Эсир манманни, сума суни пирĕншĕн, вĕрентекенсемшĕн, чи пахи. Сирĕн ăнăçусем, çитĕнӳсем пирĕншĕн те савăнăç, телей. Тавтапуç. Ыр ятлă пулăр малашне те.

И. РАЕВСКАЯ.

Ĕçĕнче ăста пулнăран

Ытти ĕç коллективĕсенчи пекех, ял тăрăхĕсен ĕçĕ-хĕлĕ те ертӳçĕ, кунта вăй хуракансем хăйсен тивĕçĕсене епле пурнăçласа пынипе тӳрремĕнех çыхăннă. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ пирки вара ку тĕлĕшпе ыррине кăна калама пулать.

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Анатолий Владимирович Лаптев ял тăрăхĕн тĕп специалисчĕ пулса тăрăшать. Çамрăк пулин те, шанса панă ĕçшĕн ответлăха çирĕп туять.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Тĕрĕслев

Çу кунĕ тимлĕрех пулма хистет

Çулла – калама çук хĕрӳ вăхăт. Анчах кунĕн-çĕрĕн çĕр ĕçĕпе аппаланакан хресченшĕн кăна мар, санэпидемстанци ĕçченĕсемшĕн те. Шăрăхра инфекци сарăлас хăрушлăх темиçе хут ӳсет, çавăнпа та санэпидемстанци специалисчĕсем пур çĕре те çитсе курма тăрăшаççĕ, тĕрлĕ объектсене тилмĕрсе тĕрĕслеççĕ. Вĕсен аллинче этемĕн чи хаклă пуянлăхĕ – сывлăхĕ, пурнăçĕ.

Роспотребнадзорăн территори управленийĕн Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкарти территори уйрăмĕн тĕп специалисчĕ Глафира Григорьевна ВОРОБЬЕВА пӳлĕмне пырса кĕрсен сăмсана чăн-чăн ĕç шăрши çапрĕ. Ĕçĕн шăрши çук тетĕр-и? Пĕр вĕçĕмсĕр шăнкăртатакан телефон сасси, компьютерăн сенкер экран выляви, документсен пăшăлтатăвĕ чӳхенет пысăках мар пӳлĕмре. "Ĕçĕ, чăнах та, нумай",- хаш сывлать Глафира Григорьевна. Районăн тĕп специалисчĕ хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа пани вулакансемшĕн усăллă та интереслĕ пуласса шанас килет.

– Глафира Григорьевна, çулла чылай шкул çумĕнче ĕçпе кану лагерĕсем уçăлнă. Вĕсен ĕç-хĕлне те асăрхаса тăратăр ĕнтĕ эсир?

– Çĕртме уйăхĕнче Муркаш районĕн территорийĕ çинче хула тулашĕнчи "Ильинский" ача-пăча лагерĕн 1-мĕш смени уçăлчĕ, вăл ОАО "Санаторий Чувашкурорта" пăхăнса тăрать. Лагерь 200 ачана йышăнчĕ. Унсăр пуçне районти 27 шкул çумĕнче 46 ĕçпе кану тата профильлĕ лагерьсен пĕрремĕш смени ĕçлерĕ. Унта 1110 ача канма пултарчĕ. Çурла уйăхĕн 3-мĕшĕнче Ильинка шкулĕ çумĕнче ĕçпе кану лагерĕ уçăлчĕ, вăл 15 ачана йышăнчĕ.

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче эпир район прокуратурипе тата район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕпе пĕрле лагерьсен ĕçне тĕрĕслерĕмĕр. Пĕтĕмĕшле илсен, лагерьсем аванах ĕçлеççĕ, ачасене канма, сывлăха çирĕплетме пур май та туса панă. Çапах та тĕрĕслев вăхăтĕнче административлă майпа йĕркене пăсни палăрчĕ. Шатракасси шкул столовăйĕнчи тирпейсĕрлĕх, Мăн Хураçкара чашăк-тирĕке çунă çĕрте хлорлă извеçпе усă курни, ирхи апат пробисене хăварманни, Калайкасси шкул столовăйĕнче урай çумалли инвентаре кирлĕ пек маркировкăламанни пăшăрхантарчĕ. Ачасемпе ĕçленĕ чухне пысăк тимлĕх уйăрмаллине шкул лагерĕсенче ĕçлекенсен пĕр самант та манмалла мар.

– Урамра чăтмалла мар шăрăх тăрать. Пурте эпир çăлăнăçа шывра шыратпăр. Эпир ĕçекен шыв нормăсене тивĕçтерет-и-ха?

– Çĕртме уйăхĕнче шыв пахалăхне тĕрĕслерĕмĕр. Пурĕ 87 проба илнĕ, вĕсенчен ĕçме юрăхсăррисем – 10. Тĕслĕхрен, санитари нормисене Мăн Шаптак, Хорнуй ялĕсенчи, Муркашри кайăк-кĕшĕк фабрикинчи, Нискасси, Тивĕш шкулĕсен столовăйĕнчи шыв пахалăхĕ тивĕçтермест. Шыв пахалăхне чакаракан тĕп сăлтавсенчен пĕри – шыв пăрăхĕсем кивелни, шыв колонкисене вăхăтра юсаса тăманни. Шыв пăрăхĕсемпе усă курмалли вăхăт 25-30 çул пулсан, пирĕн районта нумай çĕрте вĕсене 30 çул каялла хывнă ĕнтĕ. Тĕрĕслев результатĕсем тăрăх тата шывăн ăпăх анализĕсем пирки хуçалăхсен ертӳçисене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене тĕрлĕрен санитарипе эпидемиологи мероприятийĕсем ирттерме предписанисем патăмăр.

Шăрăх кунсенче шыв пĕлтерĕшĕ самай ӳсет, çавăнпа та ял çыннисене асăрхануллăрах пулма сĕнесшĕн. Таса мар шывпа усă курни халер, вар хырăм тифĕ, паратифсем, юнлă варвитти (дизентери), гепатит, туляреми, т.ыт. чирсене пуçăнма тата сарăлма май парать. Çавăнпа та вĕретмен шыва ĕçме васкамалла мар. Пур инфекци те тасамартан пуçланать.

– Шăрăх кунсенче апат-çимĕç магазинĕсенче, кафе-столовăйĕсенче те хăрушлăх сиксе тухма пултарать пулĕ-ха?

– Çапла. Шăрăх çанталăк апат-çимĕç сферинче вăй хуракансене тимлĕрех пулма хистет. Çĕртме уйăхĕнче ирттернĕ черетлĕ тĕрĕслев хыççăн "Илем" кафе, Калайкассинчи шашлычнăй ĕçченĕсене асăрхаттарма тивĕç.

Специалистсем асăрхаттараççĕ, сĕнеççĕ, анчах пирĕн çав сĕнӳсене тĕпе хурса пурăнма вĕренмелле. Сывлăх – ылтăнран та хаклă мул. Ун çине алă сулни, тимлĕхе çухатни вăхăт ирттесен хамăрах пырса çапĕ.

И. СТЕПАНОВА.